# КУРАВ




# Музейре – министр

***Чăваш патшалăх ÿнер музейĕнче Чăваш халăх художникĕн Владимир Агеевăн куравĕ уçăлчĕ.***

Çак эрнере унта ЧР культура министрĕ Константин Яковлев çитсе курчĕ. Владимир Иванович ăна куравпа паллаштарчĕ. Экспозицире – музей фондĕнче тата уйрăм çынсен коллекцийĕсенче упранакан живопиç тата графика ĕçĕсем. Вĕсене ÿнерçĕ тĕрлĕ çулта пурнăçланă.

Тĕлпулура Константин Геннадиевич тата Владимир Иванович чăваш ÿнер искусствипе, халăх йăли-йĕркине сыхласа хăварассипе çыхăннă ыйтусене сÿтсе яврĕç.